25-мӗш çул тухать: Хакӗ 20 пус.

1943
НОЯБРЬ
12
ЭРНЕКУН
224(6461) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕ

Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕ çинчен

ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРŸ

1943 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнче, 7 сехетре каçхине, Шупашкар хулинче, Советсен Çуртĕн ларусем пулакан залĕнче Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕ уçăлчĕ.

Сессие Чăваш АССР Верховный Совет Председателĕн заместителĕ В. М. Немцев депутат уçрĕ.

Чăваш АССР Верховный Совечĕ пĕр саслăн çакăн пек кун йĕрки çирĕплетрĕ:

1. Чăваш АССР бюджетне 1943 çулхи виçĕ квартал хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен.

2. Пурне те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентесси çинчен калакан закона мĕнле пурнăçлани çинчен.

3. Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕсене, V-мĕшпе VI-мĕш Сессисем хушшинче йышăннăскерсене тата Чăваш АССР Верховный Совечĕ çирĕплетме тивĕçлĕскерсене, çирĕплетесси.

4. Организациллĕ ыйтусем:

а) Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Председателĕн Заместительне суйласси;

б) Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн членĕсене суйласси;

в) Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарьне суйласси.

5. Чăваш АССР Верховный Сучĕн членĕсене суйласси.

Сессин кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйту тăрăх — Чăваш АССР бюджетне 1943 çулхи виçĕ квартал хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ И. И. Золотников юлташ доклад туса пачĕ.

Унтан Сесси Чăваш АССР Верховный Совечĕн Бюджет Комисси Председателĕн К. Д. Медянин депутатăн содокладне итлерĕ.

Çакăнпа Чăваш АССР Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕн пĕрремĕш ларăвĕ хупăнчĕ.

* * *

Ноябрĕн 11-мĕшĕнче, ирхине 10 сехетре, Советсен çуртĕн ларусем пулакан залĕнче, Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕн иккĕмĕш ларăвĕ пуçланчĕ.

Председатель пулса ертсе пыракан — Чăваш АССР Верховный Совет Председателĕн заместителĕ В. М. Немцев депутат.

Чăваш АССР бюджетне 1943 çулхи виçĕ квартал хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен тунă доклад тăрăх пренисем пуçланаççĕ.

Пренире çаксем тухса каларĕç — Н. С. Хабаров депутат (Толчково суйлав округĕ), К. А. Бычкова депутат (Муркаш суйлав округĕ), ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совет исполкомĕн председателĕ П. И. Аникин, ССР Союзĕн Верховный Совечĕн депутачĕ Т. А. Моисеева, ĕççынни депутачĕсен Канаш хула совет исполкомĕн председателĕ А. А. Белоусов, Г. А. Херсонов депутат (Ишек суйлав округĕ), ĕççынни депутачĕсен Шăхасан район совечĕн исполком председателĕ И. А. Скворцов, Чăваш АССР апат çимĕç промышленность Халăх Комиссарĕ, РСФСР Верховный Совечĕн депутачĕ П. И. Калинкина, Чăваш АССР çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Н. Г. Малов, П. И. Новикова депутат (Ряпински суйлав округĕ) тата Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ Ф. Т. Семенов.

Чăваш АССР Верховный Совечĕ Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн И. И. Золотников юлташăн юлашки сăмахне итлет.

Чăваш АССР Верховный Совечĕ Чăваш Республикин бюджетне 1943 çулхи виçĕ квартал хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен калакан закона çирĕплетме тытăнать.

Чăваш АССР Верховный Совечĕ Чăваш Республикин бюджетне 1943 çулхи виçĕ квартал хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен калакан закона уйрăм статьясем тăрăх вулаcа пĕр саслăн çирĕплетет.

Унтан Сесси кун йĕркинчи иккĕмĕш ыйтăва пăхса тухма тытăнать.

Пурне те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентесси çинчен калакан закона мĕнле пурнăçлани çинчен Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ М. П. Макаров юлташ доклад туса парать.

Çакăнпа Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕн иккĕмĕш ларăвĕ хупăнать.

* * *

Ноябрĕн 11-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, Советсен Çуртĕн ларусем пулакан залĕнче Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VI Сессийĕн виççĕмĕш ларăвĕ пулчĕ.

Председатель пулса ертсе пыракане — Чăваш АССР Верховный Совет Председателĕн заместителĕ В. М. Немцев депутат.

Пурне те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентесси çинчен калакан закон çинчен тунă доклад тăрăх пренисем пуçланчĕç.

Пренире çаксем тухса каларĕç: СССР Верховный Совечĕн депутачĕ О. Т. Харитонова, А. И. Воронцова депутат (Шăмăршă суйлав округĕ), П. А. Григорьева депутат (Шуркаси суйлав округĕ), ĕççынни депутачĕсен Улатăр хула Совет исполкомĕн председателĕ А. Н. Вельчинский тата Чăваш АССР Совнарком Председателĕн заместителĕ К. Е. Евламьев.

Кун хыççăн Сесси Чăваш АССР çутĕç Халăх Комиссарĕн юлашки сăмахне итлерĕ.

Чăваш АССР Верховный Совечĕ пурне те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентесси çинчен калакан закон мĕнле пурнăçа кĕрсе пыни çинчен йышăннă постановление пĕр саслăн çирĕплетрĕ.

Унтан Сесси кун йĕркинчи виççĕмĕш ыйтăва пăхса тухма — Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕсене, V-мĕшпе VI-мĕш Сессисем хушшинче йышăннăскерсене тата Чăваш АССР Верховный Совечĕ çирĕплетме тивĕçлĕскерсене, çирĕплетме тытăнать.

Ку ыйтупа Чăваш АССР Верховный Совет Президиум секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. И. Измайлов депутат доклад туса пачĕ.

Чăваш АССР Верховный Совечĕ Чăваш АССР Конституцийĕн 14-мĕшпе 68-мĕш статьисене хушса çырасси çинчен калакан закона пĕр саслăн йышăнать.

Сесси Чăваш АССР Верховный Совечĕ кăларнă çак Указсене — А. М. Матвеев юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ пулма уйăрса лартасси çинчен, Ф. Т. Семенов юлташа, М. Ф. Терентьев юлташа, К. Е. Евлампьев юлташа, Г. М. Никитин юлташа, В. П. Чернов юлташа, Ф. В. Васильев юлташа, А. И. Киреев юлташа тата П. П. Герасимович юлташа Чăваш АССР Совнарком Председателĕн заместителĕсем пулма уйăрса лартасси çинчен калакан Указсене, Халăх Комиссарĕсем тата ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи Управленисен начальникĕсем пулма уйăрса лартасси çинчен калакан çак Указсене çирĕплетрĕ:

Чăваш АССР Государствăн плановăй комиссийĕн Председателĕ пулма — П. В. Тощев юлташа,

Чăваш АССР государство хăрушсăрлăхĕн Халăх Комиссарĕ пулма — Л. К. Щербаков юлташа,

Чăваш АССР юстици Халăх Комиссарĕ пулма—А. Т. Краснов юлташа,

Чăваш АССР сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ пулма — А. И. Лихачев юлташа,

Чăваш АССР апат-çимĕç Халăх Комиссарĕ пулма — П. И. Калинкина юлташа,

Чăваш АССР çутĕç Халăх Комиссарĕ пулма — М. П. Макаров юлташа,

Чăваш АССР суту-илӳ Халăх Комиссарĕ пулма — Д. Г. Ларионов юлташа,

Чăваш АССР финанс Халăх Комиссарĕ пулма — И. И. Золотников юлташа,

Чăваш АССР вырăнти промышленность Халăх Комиссарĕ пулма— М. Д. Егоров юлташа,

Чăваш АССР коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссарĕ пулма — Г. Н. Сорокин юлташа,

СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйĕ пулма — Т. Г. Герасимов юлташа,

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи строительство материалĕсен промышленноçĕн Управлени начальникĕ пулма — А. К. Дембицкий юлташа,

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи искусство ĕçĕсен Управленийĕн начальникĕ пулма — А. Д. Калган юлташа,

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи автомобиль транспорчĕн Управленийĕн начальникĕ пулма — Н. С. Коротков юлташа.

Унтан Сесси кун йĕркин тăваттăмĕш пунктне — организациллĕ ыйтусене пăхма тытăнать.

Чăваш АССР Верховный Совечĕ—Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиум Председателĕн Заместителĕ пулма Д. Я. Митьков юлташа, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ пулма А. И. Измайлов юлташа, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн членĕсем пулма — Г. М. Гусев юлташа, П. А. Григорьева юлташа, Д. Е. Дмитриева юлташа, К. Р. Евдокимова юлташа, К. Т. Назаров юлташа. пĕр саслăн суйларĕ.

Унтан Сесси кун йĕркин пиллĕкмĕш пунктне пăхма — Чăваш АССР Верховный Сучĕн членĕсене суйлама тытăнать.

Чăваш АССР Верховный Сучĕн членĕсем пулма Сесси—В. П. Глинская, А. Ф. Францман, А. Е. Евсеев, Г. И. Харитонов, А. И. Миловидов, И. Т. Тимофеев юлташсене суйларĕ.

Сесси Чăваш АССР Верховный Сучĕн халăх заседателĕсем пулса ĕçлеме 133 çынна суйларĕ.

Кун хыççăн председатель пулса ертсе пыраканĕ Чăваш АССР Верховный Совет Председателĕн Заместителĕ В. М. Немцев депутат — VI-мĕш Сессин кун йĕркинчи ыйтусене пăхса тухнă тата Чăваш АССР Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕ хупăннă, тесе пĕлтерчĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ

„Çĕнтерӳ“ орденĕ тăвасси çинчен

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ **çапла йышăнать:**

1. Хĕрлĕ Çарăн аслă командăй составĕнчи çынсене наградăлама чи аслă çар орденĕ — **«Çĕнтерӳ»** орденĕ тăвас.

2. **«Çĕнтерӳ»** орденĕн статутне çирĕплетес.

3. **«Çĕнтерӳ»** орденĕ мĕнле пулмалли çинчен çырса пĕлтернине çирĕплетес.

4. **«Çĕнтерӳ»** орденĕпе наградăланă çынсене уйрăмах палăртса хăварма, **«Çĕнтерӳ»** орденĕн кавалерĕсен ячĕсене çырса хумашкăн, мемориальнăй хăма тăвас. Мемориальнăй хăмана Кремльти Пысăк Дворецра лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН

Мускав, Кремль. 1943 çулхи ноябрĕн 8-мĕшĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ

I-мĕш, II-мĕш тата III-мĕш степень МУХТАВ орденĕ тăвасси çинчен

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ **çапла йышăнать:**

1. Хĕрлĕ Çарăн рядовойсемпе сержантсен составĕнчи çынсене, авиацире вара кĕçĕн лейтенант званинче тăраканнисене те, советлă Тăван çĕршывшăн пыракан çапăçусенче чапа тухнăскерсене, наградăлама I-мĕш, II-мĕш тата III-мĕш степень **Мухтав** орденĕ тăвас.

2. I-мĕш, II-мĕш тата III-мĕш степень **Мухтав** орденĕн статутне çирĕплетес.

3. I-мĕш, II-мĕш тата III-мĕш степень **Мухтав** орденĕ мĕнле пулмалли çинчен çырса кăтартнине çирĕплетес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 çулхи ноябрĕн 8-мĕшĕ

Чăваш АССР-ĕн 1943 çулхи бюджетне кăçалхи 9 уйăх хушшинче пурнăçлани çинчен

(Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ И. И. Золотников юлташ тунă докладран)

Депутат юлташсем!

Пирĕн республикăри ĕççыннисем, пĕтĕм Совет Союзĕнчи ĕççыннисем пекех, партипе правительство хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшас тата хамăр государствăн финанс хăватне ӳстерес тĕлĕшпе тăвакан мĕнпур ĕçсене активлăн хутшăнаççĕ.

1942 çулта пĕрремĕш Государственнăй Военнăй Заема пирĕн республикăра 66.667.000 тенкĕлĕх сарнă. 1943 çулта иккĕмĕш Военнăй Заема тата ăнăçлăрах сарнă, ăна пирĕн республикăра 137.427.000 тенкĕлĕх сарнă.

Укçапа япаласен пĕрремĕш лотерейин билечĕсене пирĕн республикăра 6.110.000 тенкĕлĕх, иккĕмĕш лотерейăн билечĕсене—16.511.000 тенкĕлĕх сарнă. укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейине вара 31 миллион тенкĕлĕх сарнă.

Тамбов облаçĕнчи колхозниксем пуçарнипе, Чăваш республикинчи рабочисемпе колхозниксем, служащисем, алăстаççемпе ремесленниксем, пенсионерсем, килхуçи хĕрарăмĕсем тата вĕренекенсем танксемпе самолетсем тумашкăн Хĕрлĕ Çар фондне 71 миллион тенкĕ ытла укçа хывнă. А. М. Сарсков, М. В. Дубровин, Минаев тата ытти колхозниксем те патриотизмăн чаплă тĕслĕхне кăтартрĕç: вĕсем Хĕрлĕ Çар валли боевой техника тумашкăн çĕршер пин тенкĕ хыврĕç.

Отечественнăй аслă вăрçă халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсен ĕçне улăштарма хушрĕ. Вăрçă валли укçа-тенкĕ пĕр чарăнмасăр парса тăрас тесе, партипе правительство финанс учрежденисем умне те пысăк требованисем лартрĕç. Государство бюджечĕ вăл — пирĕн государствăн финанс планĕ пулса тăрать. Вăл халăх хуçалăхĕпе таччăн çыхăнса тăрать. Çавăнпа çав плана пурнăçа кĕртесси, чи малтан, халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсем те хăйсен укçа-тенкĕ тата налог обязательствисене пĕтĕмĕшлех тултарнинчен килет. Бюджета укçа ытларах парас тесе, правительство военнăй налог кăларчĕ, авланман, пĕччен пурăнакан тата ачасăр граждансем çине хăйне уйрăм налог хучĕ, ялхуçалăх налогĕ çинчен калакан закона тата подоходнăй налог çинчен калакан закона кăшт улăштарчĕ. Отечественнăй вăрçă пирки тухса тăнă çак ĕçсене пирĕн учрежденисем пурнăçа начар мар кĕртсе пыраççĕ, Совет Союзĕн государство бюджечĕ тата вырăнти бюджетсем вăрçă вăхăтĕнчи расходсем валли укçа пĕр чарăнмасăр парса тăраççĕ.

Чăваш АССР-ĕн 1943 çулхи бюджечĕ çакăн пек: тупăшсем — 151.674.000 тенкĕ, расходсем — 149.018.000 тенкĕ пулмалла. Бюджетăн тупăш пайĕ расходсенчен 2.656 пин тенкĕ ытларах.

Тăхăр уйăх хушшинче çав бюджета çакăн чухлĕ пурнăçа кĕртнĕ: тупăшсем тĕлĕшпе — 106.843 пин тенкĕ чухлĕ (çакă вăл тупăшсен планне 70,4 процент тултарни пулать), расходсем тĕлĕшпе—91.649 пин тенкĕ чухлĕ (çак вăл расходсен планне 61,5 процент тултарни пулать).

Бюджетăн тупăш пайне 9 уйăх хушшинче мĕнле пурнăçлани çинчен каласа паратăп.

Хуçалăх наркомачĕсемпе управленисем çулталăк хушшинче бюджета 11.444,2 пин тенкĕ тупăш памалла пулнă пулсан, вĕсем 9 уйăх хушшинче 8.188,2 пин тенкĕ панă, урăхла каласан, планăн 71,6 проценчĕ чухлĕ панă.

Хăйсен бюджет умĕнчи обязательствисене тата çаксем начар мар пурнăçлаççĕ: Наркомпищепром предприятийĕсем плана 85,8 процент тултарнă, топливо промышленноçĕн управленийĕ плана 80,1 процент тултарнă. Наркомземăн хуçалăх организацийĕсем плана 87,9 процент тултарнă.

Хăйсен обязательствисене çаксем вара питĕ начар пурнăçлаççĕ: Наркомлес предприятийĕсем плана 34,4 процент çеç тултарнă, Коммунальнăй хуçалăх Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем плана 60,0 процент тултарнă, суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн системи плана 62,4 процент çеç тултарнă.

Рыбтрест бюджета 153,0 пин тенкĕ памалла пулнă, анчах вăл 83,2 пин тенкĕ çеç панă. Çав трест (унăн управляющийĕ Макаров юлташ) хăйĕн ĕçне тивĕçлипе туса пыраймасть. Пулă тытмалли плана вăл 9 уйăх хушшинче 73,2 процент çеç пурнăçланă.

Чăвашторг тата столовăйсен тресчĕ 1943 çулта бюджета 3.428 пин тенкĕ памалла, вĕсем 9 уйăх хушшинче 2.208,8 пин тенкĕ çеç панă, çулталăкри плана 64,4 процент çеç тултарнă. Чăвашторг тата столовăйсен тресчĕ хăйсен суту-илӳпе производство планĕсене пурнăçламан.

Столовăйсен тресчĕ подсобнăй хуçалăх ĕçĕсене начар организацилене, децзаготовка планне пурнăçламасть. Децзаготовка тĕлĕшпе ĕçсем Чăвашторг системинче те лайăххах мар. Япаласене вăрлани тата салатса пĕтерни кунта пысăк сиен кӳрет. Суту-илӳ Халăх Комиссарĕн Ларионов юлташăн çак ĕçре çирĕп йĕрке туса хумалла.

Коммунальнăй хуçалăх Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсенчен пуринчен ытларах Стройтрестпа Водосвет çине çавăрăнса пăхмалла. Строительство программипе финанс планĕ тăрăх Стройтрестăн (унăн управляющийĕ Стешов юлташ) бюджета 280 пин тенкĕ памалла пулнă, вăл 9 уйăх хушшинче мĕн пурĕ те 33 пин тенкĕ çеç панă, урăхла каласан, плана 11,8 процент çеç тултарнă. Строительство программине 8 уйăх хушшинче 27,2 процент чухлĕ çеç пурнăçланă. Çав трест ытти организацисенчен кивçен укçа илнĕ, çавăн пирки унăн парăмĕ сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 797 пин тенке çитнĕ.

Учетпа отчетноçа унта начар туса пыраççĕ, дебиторсемпе кредиторсен расчечĕсене тĕрĕслемеççĕ, баланс комиссийĕ 1942 çулхи итогсем тăрăх кăтартса панисене пурнăça кĕртмеççĕ.

Коммунальнăй хуçалăх Халăх Комиссарĕн Сорокин юлташăн Чăваш Стройтресчĕн çав пысăк çитменлĕхĕсене пĕтермешкĕн татăклă мерăсем йышăнмалла.

Шупашкарти электростанци 8 уйăх хушшинче çулталăкри плана 45,3 процент çеç пурнăçланă, 8 уйăхри плана 74,5 процент çеç пурнăçланă. Хулари предприятисемпе учрежденисене тата халăха 1.390 пин киловат сехет энерги планран сахалтарах панă.

Электростанци начар ĕçленĕ пирки хулари 6 предприяти кăна государство бюджетне укçа 4.433 пин тенкĕ сахалтарах панă.

Электростанци руководителĕсем топливона перекетлессишĕн пĕртте кĕрешмеççĕ. Кăçал унта нефте 162,4 тонна ытларах расходланă. Электростанцин финанс хуçалăхĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур. Кредиторсене памалли парăмĕ унăн 202 пин тенке çитнĕ.

Водосветăн финансĕпе хуçалăхĕ çакăн пек начар пулнине чăтса тăма çук. Наркомхозăн унта çирĕп йĕрке туса хумалла, электричество энергийĕ туса памалли плана пĕтĕмĕшлех тултармалла тумалла, хулари предприятисене, артельсене тата ытти организацисене çителĕклĕ энерги памалла.

Хальхи вăхăтра стройматериалсен промышленноçĕ лайăх ĕçлени питĕ кирлĕ. Анчах çав промышленноçăн предприятийĕсем хальхи вăхăтра начар ĕçлеççĕ-ха. Шупашкарти кирпĕч завочĕ 9 уйăх хушшинче çĕршыва 328 пин кирпĕч сахалтарах туса панă. Çавна пула вăл 9 уйăх хушшинче 77,3 пин тенкĕ тăкак курнă. Стройматериалсен промышленноçĕн управленийĕн ытти предприятийĕсенче те ĕçсем кунтан лайăххах мар.

Коопераци промышленноçĕ, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, пĕртак лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Коопераци тăватă союзĕ 9 уйăх хушшинче, 1932 çулхи хакпа шутласан, 35.581 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă, çакă вăл плана 105,3 процент тултарни пулать. Çав кăтартнă шутран пурне те кирлĕ таварсем 26.054 пин тенкĕлĕх (122,8 процент) туса кăларнă. Бюджета укçа 110,5 процент чухлĕ тӳленĕ. Промкоопераци ĕçĕ лайăхланни унта социализмлă ăмăртăва анлăн сарнипе тата ăмăртура мала тухнă çынсене премисем панинчен нумай килнĕ.

Анчах та çакна калас пулать: пурне те кирлĕ таварсем тăвас тĕлĕшпе промкоопераци союзĕсен пур руководителĕсем те тата пур райсоветсемпе хула совечĕсем те мар çителĕклĕ таран ĕçлеççĕ-ха.

Союзсен нумай артелĕсенче учетпа отчетноçа начар туса пыраççĕ. Хăшпĕр артельсем хăйсен отчечĕсемпе балансĕсене темиçе çул хушши памасăр тăраççĕ. Союзсен руководителĕсем тата промкоопераци РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи управленийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Степанов юлташ çак ыйту çине халĕ те çителĕклĕ çавăрăнса пăхмаççĕ-ха. Шут ĕçне пĕлекен çынсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ.

Государство бюджетне пурнăçланă çĕрте таварçавăрнăшĕнчен илекен налог питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Государство тупăшĕсенчен пĕр пайĕ вырăнти бюджета кĕрет. План тăрăх 9 уйăх хушшинче государство тупăшĕсем 266.450 пин тенкĕ кĕмелле пулнă, тĕрĕссипе 99,5 процент чухлĕ кĕнĕ.

Государство тупăшĕсен планне спиртпа эрех промышленноçĕ, çу тата сăра промышленноçĕ, промысла кооперацийĕ ирттерсе тултарнă. Анчах вăл плана уполнаркомзаг системи, тир-сăран, пир-авăр, нефтесбыт тата ытти хăшпĕр системăсем тултарман.

Государство тупăшĕсен планне ирттерсе тултарма майсем нумай. Анчах пир-авăрпа нефть тĕлĕшпе кăтартса панă фондсене пурне те илсе килмен пирки, тир-сăранпа атă-пушмак предприятийĕсем начар ĕçленĕ пирки, Сĕнтĕрвăрринчи спирт завочĕ чарăна-чарăна ĕçленĕ пирки çав майсене пурнăçа кĕртмен.

Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Первомайски тата Канаш районĕсем государство тупăшĕсен планне нихăçан та пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Çав районсенчи райсовет исполкомĕсем тата финанс работникĕсем предприятисен, артельсен тата суту-илӳ организацисен ĕçне начар контрольлесе тăраççĕ.

Бюджета пурнăçлас ĕçре государство тупăшĕсем çав тери пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, финанс органĕсен çав тупăшсене вăхăтра илесси çине хытă çавăрăнса пăхмалла, ĕççынни депутачĕсен район совечĕсемпе хула совечĕсен çав ĕçре финанс органĕсене те, налог тӳлекенсене те мĕн вăй çитнĕ таран пулăшмалла. Халăх Комиссариачĕсемпе управленисен хăйсен предприятийĕсемпе хуçалăх организацийĕсен ĕçне кирлĕ пек тĕрĕслесе тăмалла.

Союзăн, республикăн тата вырăнти бюджетсен пысăк тупăшĕсенчен пĕри вăл — усламсенчен уйăрса паракан укçа пулса тăрать. Пирĕн республикăра 29 предприяти хăйсен тупăшĕнчен Совет Союзĕн бюджетне, 15 предприятипе организаци — РСФСР бюджетне, 50 предприяти — вырăнти бюджета уйăрса параççĕ.

Çав предприятисенчен 9 уйăх хушшинче бюджета 23.264,0 пин тенкĕ кĕнĕ.

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕ

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ И. И. Золотников юлташ тунă докладăн юлашки

Хăшпĕр предприятисемпе организацисен руководителĕсем тивĕçлĕ бюджета памалли укçана хăйсем патĕнче тытса тăраççĕ. Пуринчен ытла Союзторгплодоовощăн Чăваш республикинчи контори (управляющийĕ Белянкин юлташ), Чăвашмаслопром тресчĕ (управляющийĕ Васильев юлташ) тата Леспродторг (директорĕ Николаев юлташ) çавăн пек хăтланаççĕ.

Наркомзем системинчи хуçалăх организацийĕсем те бюджета вăхăтра укçа тӳлемеççĕ. Çавăн пирки Наркомфинăн çав учрежденисемпе организацисем тӳлемелли укçана вĕсен сметинчен ирĕксĕр йĕркепе час-часах илмелле пулнă.

Чылай наркоматсемпе управленисем отчетсемпе балансене пăхса тухас ĕçе вăраха янă. Балансене апрелĕн 15-мĕшĕнчех пăхса тухса пĕтермелле пулнă. Наркомхоз Стройтрестпа Чăвашпроект отчечĕсене август уйăхĕнче тин çирĕплетнĕ, Наркомторг Чăвашторг отчетне сентябрĕн 26-мĕшĕнче тин пăхса тухса çирĕплетнĕ, столовăйсен трестĕн отчетне вара халиччен те пăхса тухса çирĕплетмен. Чăваш АССР Наркомземĕ 1942 çулшăн пĕр хуçалăх организацийĕн отчетне те пăхса тухса çирĕплетмен, МТС-сен отчетне кăна çирĕплетнĕ.

Çак фактсем ĕнтĕ ак çакна кăтартаççĕ: хăшпĕр хуçалăх организацисемпе предприятисен руководителĕсем финанс хуçалăхĕпе тата хăйсен бюджет умĕнчи обязательствисене пурнăçлассипе сахал интересленеççĕ. Вĕсем производство программине пĕтĕмĕшпе илсен мĕнчухлĕ пурнăçланипе çеç интересленеççĕ. Продукцин хăйне ларакан хакĕ мĕнле, предприяти мĕн чухлĕ тупăшлă, çухатусем, брак тата ытти те мĕн чухлĕ, предприяти ĕçĕ финанс тĕлĕшпе мĕнле результат парать? — çак ыйтусемпе вĕсем сайра хутра кăна интересленеççĕ. Анчах, тĕрĕссипе, çав ыйтусене тĕплĕн вĕренмесĕр хуçалăха тĕрĕс ертсе пыма çук. В. М. Молотов юлташ кăтартса панине яланах асра тытас пулать. Вăл çапла каланă: «Экономика çине тата туса кăларакан продукцин хакĕ çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмалла. Кашни предприятин, кашни организацин ĕçĕ государствăна мĕн хака ларнине лайăх пĕлсе тăмалла. Анчах пирĕн баланса пăхса илме, отчетноçа вĕренме, хозрасчетшăн тăрăшма йĕрĕнсе тăракан хуçалăх руководителĕсем халĕ те тупăнаççĕ-ха...»

Халăх тӳлекен налогсен пĕлтерĕшĕпе вырăнĕ Отечественнăй вăрçă условийĕсенче чылай ӳлшăнчĕ. Военнăй налог хунине пула, авланман тата ачасăр гражданесенчен хăйне уйрăм налог илнине пула, ялхуçалăх налогĕ тӳлемелли нормăсене ӳстернине пула тата подоходнăй налог çинчен калакан закона кăшт улăштарнине пула халăх тӳлекен налогсем бюджет тупăшĕсенче ытларах вырăн йышăнса тăра пуçларĕç. Çавăнпа та налог ĕçĕ халь вăрçăччен хинчен нумай пысăкрах ĕç пулса тăчĕ. Ун çине халь налог аппарачĕн те, пĕтĕм финанс системин те тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Паллах ĕнтĕ, çав ĕçрен ĕççынни депутачĕсен вырăнти совечĕсен исполкомĕсем те аякра тăма пултараймаççĕ.

Налог пухас плана кварталтан квартала тултарса пыман районсем те пур-ха пирĕн. Çапла, Йăрачкав районĕ 3-мĕш кварталти плана 56,4 процент, Хĕрлĕ Чутай районĕ—50,2 процент, Çĕмĕрле районĕ—43,3 процент, Кувакино районĕ 42,8 процент кăна тултарнă.

Налог хурас-илес ĕçре налогсем тĕлĕшпе памалли çăмăллăхсене, пуринчен ытла çар çыннисен çемьисене тата Отечественнăй вăрçăн инвалидĕсене памалли çăмăллăхсене, тĕрĕс шутласа парасси питĕ пысăк ĕç пулса тăрать. Анчах та вырăнсенче çав ĕç çине пур чухне те тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ. Çак тĕлĕшпе Комсомольски, Канаш, Çĕмĕрле тата Тăвай районĕсенче ĕç уйрăмах начар тăнă.

Государство страхованийĕн пĕтĕм планне иртнĕ виçĕ квартал хушшинче 94,7 процент пурнăçланă. План тăрăх 19.566 пин тенкĕ пухмалла пулсан, 18.521,4 пин тенкĕ пухнă. 1943 çулта окладной страховани тĕлĕшпе Госстрах управленийĕ, унăн вырăнти инспекцийĕ тата райфинотдел заведующийĕсем начар ĕçленĕ.

Республикăра, пуринчен ытла Сĕнтĕр, Советски, Йĕпреç тата Тăвай районĕсенче, ирĕклĕн страховани тăвас ĕçе начар организациленĕ.

Перекет кассисен управленийĕ тăрăх 9 уйăх хушшинче бюджета 123.687 пин тенкĕ кĕнĕ, ку вăл плана 159,7 процент тултарни пулать. Перекет кассисен системинче плана нумай ирттерсе тултарни Иккĕмĕш Военнăй Заем тăрăх пысăк суммăсем кĕнипе пулнă. Çав заема кĕске вăхăтрах 137.427 пин тенкĕлĕх сарнă, бюджетра ăна 93.300 пин тенкĕлĕх сарма палăртса хунă пулнă.

Задача çакă пулса тăрать: малтан çыраннă суммăна çирĕп тытса тăмалла, ĕçлеме çĕнĕрен кĕрекен рабочисемпе служащисене çав заема çырăнтармалла. Ялта çывăх вăхăтрах пĕтĕм çыраннă суммăна пустармалла.

Бюджетăн расход пайĕ

Республика бюджечĕ расход енĕпе иртнĕ тăхăр уйăх хушшинче 61,5 процент пурнăçа кĕнĕ. Бюджет расходăн уйрăм статьисем тăрăх мĕнле пурнăçа кĕнине çак таблица кăтартса парать:

	План (пиншер тенкĕпе)	Пурнăçланă (пиншер тенкĕпе)	Процентпа шутласан
Промышленность	6511	2865	44,0
Ялхуçалăхĕ	2955,0	1538,0	52,0
Коммуналлă хуçалăх	1557,0	1266,0	27,0
Çулйĕр хуçалăхĕ	370,0	317,0	83,4
Автотранспорт	50,0	25,0	50,0
Суту-илӳ	468,0	222,0	47,0
Çыхăну	53,0	24,0	45,3
Çутĕç	64071,0	39032,0	61,5
Сывлăха сыхлас ĕç	33866,0	22028,0	65,7
Физкультура	200,0	46,0	23,0
Социальнăй обеспечени	3134,0	1521,0	48,5
Управлени	21290,0	14155,0	66,5

Чăваш АССР Совнаркомĕ хăйĕн постановленийĕсенче ĕççынни депутачĕсен районсенчи тата хуласенчи совечĕсен чылай исполкомĕсен финанспа бюджет ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине пĕр хутчен кăна мар палăртнă тата вĕсене 1943 çулхи бюджета пурнăçа кĕртес ĕçри çитменлĕхсене пĕтермешкĕн тăтăклă мерăсем йышăнма хушнă. Совнарком пĕтĕм халăх хуçалăхĕнче перекетлĕхе çирĕп тытса пырасси — вăрçă вăхăтĕнчи закон пулни çинчен асăрхаттарнă, халăх укçи-тенкисене расходласси çине питех те тимлĕн çавăрăнса пăхма, укçапа материалсене çирĕп перекетлеме хушнă.

Анчах хăшпĕр наркоматсемпе управленисем, районсемпе хуласенчи советсен исполкомĕсем Совнарком çавăн пек кăтартса панисенчен хăйсем валли кирлĕ выводсем туман. Çавăнпа та ĕнтĕ кăçалхи тăхăр уйăх хушшинче бюджет мĕнле пурнăçа кĕнине пăхсан, халĕ те пысăк çитменлĕхсем пуррине куратпăр. Финанс органĕсем бюджетри укçа-тенкĕне учрежденисемпе организацисем, предприятисемпе хуçалăх организацийĕсем мĕнле расходланине çителĕклĕ таран контроллесе тăмаççĕ.

Бюджет укçи-тенкисемпе çакăн пек çителĕксĕр усă курнин тĕп сăлтавĕ çакăнта: чылай наркоматсемпе управленисем, районсемпе хуласенчи советсен исполкомĕсем строительство программине пурнăçа кĕртессишĕн, массăллă учрежденисен ĕçне кирлĕ пек йĕркелессишĕн, сыватакан тата вĕренӳ заведенийĕсен кадрĕсене пĕтĕмĕшпех тупса çитерессишĕн тата планпа палăртнă ытти чылай мероприятисене пурнăçа кĕртессишĕн тивĕçлĕ мерăсем йышăнман.

Чăваш АССР Наркомместпромĕ енĕпе бюджет тăрăх районсенчи промышленноçа укçа-тенкĕ хывма 85 пин тенкĕ пăхнă пулнă. Иртнĕ виçĕ квартал хушшинче çак укçа-тенкĕпе пачах усă курман, мĕншĕн тесен наркомат хăй те октябрь уйăхĕччченех вĕсене мĕнле объектсем тунă çĕре ярассине палăртман.

Коммуналлă хуçалăх наркомачĕ енĕпе хулари электростанцисене хытă топливо çине куçарма 1.760 пин тенкĕ уйăрса пама пăхнăччĕ, çак ĕç пурнăçа кĕмесĕрех юлчĕ, мĕн пурĕ те проект ĕçĕсене тума 65 пин тенкĕ çеç расходланă. Çурт-йĕр строительстви валли бюджет шучĕпе 95 пин тенкĕ расходлама пăхнă. Çак суммăпа пачах та усă курман.

Хуласемпе район центрĕсене юсаса йĕркелесси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Шупашкар хула совечĕн исполкомĕ кăçал çулйĕрсемпе кĕпер хуçалăхĕ валли панă укçапа начар мар усă курчĕ. Анчах та, Наркомхоз тата нумай райисполкомсемпе горисполкомсен айăпĕпе, хуласемпе район центрĕсене юсаса, йĕркелеме уйăрса панă укçана 383,0 пин тенкĕ чухлĕ усă курман.

Автотранспорт управленине хытă топливо (чуркăсем) хатĕрлеме 50 пин тенкĕ пама пăхнă пулнă. Анчах çак ĕçе начар йĕркеленĕ, çавна пула панă укçа-тенкĕпе çурри çеç усă курнă.

Наркомземăн республика бюджетĕнчен укçа-тенкĕ илсе тăракан тĕп мероприятийĕсем енĕпе 9 уйăх хушшинче 744 пин тенкĕрен 321,2 пин тенкипе çеç усă курнă. Вăрлăх тĕрĕслекен лабораторисем валли, ветеринарипе бактериологи мероприятийĕсем валли, уйхире шыв пымалла тăвас тата шурлăхсене типĕтес, ялхуçалăх сăтăрçисемпе кĕрешес ĕçсем валли панă укçа-тенкĕпе сахал усă курнă. Мелиораци енĕпе уйăрса панă 15 пин тенкĕпе пачах та усă курман.

Илсе кăтартнă примерсемпе фактсем бюджетри тата ытти укçа-тенкĕне лайăхрах усă курма май пуррине, çак ĕçри çитменлĕхсем пĕтĕмĕшпех наркоматсемпе управленисенчен, ĕççынни депутачĕсен районсенчи тата хуласенчи совечĕсен исполкомĕсенчен хăйсенчен килнине кăтартса параççĕ.

Социаллă-культурăллă мероприятисем енĕпе бюджетра 101,271 пин тенкĕ расходлама палăртнă, çакă вăл пĕтĕм бюджетри расход пайĕн 68 процентчĕ чухлĕ пулать. Халăха çутта кăларас ĕç валли 64.071 пин тенкĕ пама пăхнă, 9 уйăх хушшинче вĕсенчен 39.082 тенкипе çеç усă курнă, çакă вăл 61,5 процент пулать. Наркомпрос тата вырăнти советсен хăшпĕр исполкомĕсем тума палăртнă мероприятисене пурнăçа кĕртессишĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ. Уйрăмах вĕренӳ пособийĕсем, шкул оборудованийĕпе инвентарĕсем çĕнĕрен туянас тата вĕсене юсас ĕçсем валли уйăрнă укçа-тенкĕпе çителĕксĕр усă курнă. Лимитсăр пуçне расходлама ирĕк панă 408,0 пин тенкĕрен 206 пин тенкĕпе çеç усă курнă, ялсенче шкулсем тума панă 210 пин тенкĕ укçа пачах та ĕçе кĕмесĕр юлчĕ.

Çутĕç учрежденийĕсем (вулав çурчĕсем, библиотекăсем тата культура çурчĕсем) валли 9 уйăх хушшинче 1.045 пин тенкĕ расходланă, çакă вăл çулталăкра расходлама панă суммăн 38,2 процентчĕ пулать.

Ача çуртĕсем енĕпе те укçа-тенкĕ çителĕксĕр расходлаççĕ. Бюджетпа пăхнă пĕтĕм укçаран 9 уйăх хушшинче 2.488 пин тенкипе çеç усă курнă, урăхла каласан, çакă вăл 53 процент пулать. Хуласемпе районсенче ача садĕсене тытса тăма 1.973 пин тенкĕ, урăхла каласан, 56 процент чухлĕ çеç расходланă. Вĕренӳ пособийĕсем, инвентарьсем тата апат-çимĕç илмелли укçапа усă курасси те пачах çителĕксĕр.

Наркомпроса туберкулезпа чирлĕ ачасем валли ятарласа сад уçма 189 пин тенкĕ укçа уйăрса панăччĕ. Анчах вăл ку ĕçе вăраха ячĕ, укçапа ку таранччченех усă курман.

Шкулсем çумĕнче интернатсем уçма пĕтĕмпе 134 пин тенкĕ пама пăхнă, вĕсенчен пурĕ те 23 пин тенкипе кăна усă курнă. Интернатсем Шупашкарпа Ишлей районĕсенче тата Шупашкар хулинче анчах уçнă, ытти районсемпе хуласенче вĕсене уçман-ха.

Вырăнти советсен исполкомĕсем тата Наркомпрос системинчи учрежденисен руководителĕсем шкулсене вутă хатĕрлесе турттарса парас тĕлĕшпе çителĕклĕ таран мерăсем йышăнман.

Партипе правительство ача-пăча учрежденийĕсем çине пысăк тимлĕхпе çавăрăнса пăхаççĕ, вĕсене çителĕклĕ таранах укçа-тенкĕ, фондсем тата материалсем парса тăраççĕ. Çак ĕçсем валли панă укçа-тенкĕпе çителĕксĕр усă курни пĕрре те вырăнлă мар. Çак çитменлĕхсене /çитес вăхăтрах пĕтерес пулать, ачасемшĕн, уйрăмах çарти çынсен ачисемшĕн, фронтовиксен тата отечественнăй вăрçă инвалидĕсен ачисемшĕн çине тăрса тăрăшмалла.

Çавăн пекех вулав çурчĕсен, библиотекăсен, культура çурчĕсен ĕçне те юсаса йĕркелемелле.

Сывлăха сыхлас ĕçе 9 уйăх хушшинче 22.028 пин тенкĕ расходланă, çакă вăл çулталăкра расходлама палăртнă укçан 65,7 процентне расходлани пулать. Наркомздравăн районсемпе ялсенчи сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисен нушисем валли панă укçапа усă курасси уйрăмах çителĕксĕр. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне фельдшер пункчĕсем — 2, фельдшерски-акушерски пункчĕсем— 5, акушер пункчĕсем — 8 ĕçе кĕрсе çитеймен-ха. Хула больницисенче планпа пăхнă хисепрен 100 койка, ялсенчи больницăсенче — 158 койка чухлĕ сахалтарах.

Сыватакан учрежденисемпе яслисенчен чылайĕшне юсас пулать. Çак ĕç валли 417 пин тенкĕ пăхнă, анчах та 9 уйăх хушшинче пĕтĕмпе те 134,8 пин тенкипе, урăхла каласан, 32,3 процент чухлĕ çеç усă курнă.

Наркомздрав курссем валли пăхнă укçа-тенкĕпе çителĕксĕр усă курать. Çулталăкра расходлама палăртнă 102,5 пин тенкĕрен 9 уйăх хушшинче пĕтĕмпе те 16,8 пин тенкипе çеç усă курнă, медицина шкулĕсем енĕпе те панă укçапа усă курасси кайра тăрать.

Социальнăй обеспечени мероприятийĕсем валли 1943 çулта 3.134 пин тенкĕ пама пăхнă, 9 уйăх хушшинче тĕрĕссипе 1.521 пин тенкипе е 48,5 процент чухлĕ çеç усă курнă. Инвалидсен çуртĕсене тытса тăма пăхнă 1.348,1 пин тенкĕрен 453,9 пин тенкипе çеç усă курнă. Туберкулезпа чирлĕ инвалидсен çуртне уçма палăртнăччĕ, анчах ăна ку таринччченех уçман.

Отечественнăй вăрçă инвалидĕсемпе вĕсен çемьисене пенсисем парса тăрас ĕçре те çитменлĕхсем нумай-ха.

Физкультурăпа спорт ĕçĕн республикăри комитетне кăçал 200 пин тенкĕ пама пăхнă. Иртнĕ çул 65 пин тенкĕ панă пулнă. 9 уйăх хушшинче пĕтĕмпе те 46 пин тенкипе е 23,0 процент чухлĕ çеç усă курнă. Комитет чылай мероприятисене пурнăçа кĕртмесĕр хăварнă. Физкультурăпа спорт ĕçĕ, уйрăмах вăрçă вăхăтĕнче, питех те пысăк вырăн йышăнать, çавăнпа та панă укçапа усă курмасăр юлни пулмалла мар.

Искусство енĕпе тумалли мероприятисем валли бюджетпа 515,0 пин тенкĕ пăхнă, 9 уйăх хушшинче 255,9 пин тенкипе çеç усă курнă.

Кăçал юрăпа ташă ансамбльне, музыка шкулне, пуканесен театрне тепĕр хут организациленĕ. Çак учрежденисене тытса тăма бюджетпа кирлĕ чухлĕ укçа-тенкĕ панă. Академи театрĕ финанс планне чылай лайăх пурнăçласа пырать.

Управлени расхочĕсем, иртнĕ çулсенчипе танлаштарсан, пăртак ӳснĕ. Çакă вăл районсенчи тата хуласенчи советсен исполкомĕсем çумĕнче çĕнĕрен чылай отделсем тунипе, обеспечени, промышленность отделĕсем, карточка бюровĕ, апат-çимĕç карточкисемпе мĕнле усă курнине тĕрĕслесе тăракан бюро тата ытти те тунипе пулчĕ. Управлени енĕпе кăçал пурĕ 21.200 пин тенкĕ расходламалла пулнă. 9 уйăх хушшинче 14.155 пин тенкĕ расходланă, çакă вăл 66,5 процент чухлĕ пулать. Управлени аппарачĕсем хальхи вăхăтра тĕрĕс те çавăрăнăçуллă, оперативно ĕçленипе палăрса тăмалла. Кашни совет учрежденийĕ çак паха енсене пурнăçа кĕртсе пымалла.

Сталин юлташ 1926 çулта Ленинград хулинчи активăн пухăвĕнче çапла каланă: «Кашни рабочи, кашни тӳрĕ кăмăллă хресчен перекетлĕх режимне пурнăça кĕртме, государство укçи-тенкине вăрлакансене тата салатакансене хирĕç кĕрешме, пирĕн государство аппаратне сыватма тата йӳнетме партипе правительствăна пулăшса тăни кирлĕ», тенĕ. Çак кăтартусем хальхи вăхăтра татах та пахарах вырăн йышăнса тăраççĕ.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн кун умĕн пулса иртнĕ Сессийĕсенче депутатсем вырăнти советсемпе финанс органĕсем ялти бюджета тĕреклетессишĕн тата ăна лайăхлатассишĕн çителĕксĕр ĕçленине кăтартса панă. Ку ыйтăва çак Сессире те çĕклес пулать. Ялти бюджет витĕр 16 миллион тенкĕ укçа тухать. Ялшăн питĕ паха пулса тăракан мероприятисем валли ялти бюджетсем урлă укçа-тенкĕ парса тăраççĕ. Анчах ялсовечĕсен нумай исполкомĕсем бюджет ĕçне япăхтарса янă, вăл пурнăçа мĕнле кĕрсе пынипе интересленмеççĕ.

Районсенчи бюджета пурнăça кĕртес ĕçре те финанспа бюджет дисциплинине чылай пăснисем пур. Çавăнпа та контрольпе ревизи ĕçне Наркомфин енĕпе те, наркоматсемпе управленисем енĕпе те татăклăн лайăхлатас пулать. Анчах контролерсемпе ревизорсен штачĕ нумай районсенче, çавăн пекех наркоматсенче те, çитмеççĕ-ха. Контрольпе ревизи тăвас ĕçре çакăн пек сӳрĕклĕхе халех пĕтермелле.

Пĕтĕм финанс аппарачĕн ĕçне татăклăн лайăхлатни, вырăнти советсен исполкомĕсем финанс органĕсен ĕçĕ çине тимлĕн çавăрăнса пăхни тата тупăш планне пур енĕпе те пурнăça кĕртнĕ çĕрте активлăн пулăшса тăни, бюджетри укçа-тенкĕсене мĕнле расходланине тăтăшах контроллесе тăни 1943 çулхи бюджета ăнăçлăн пурнăça кĕртме пулăшĕ. Çакă вара пире çĕнĕрен темиçе миллион тенкĕ хушса парĕ, çакă вăл фашистла ирсĕрсене пирĕн тăван çĕршывран пуçĕпех хăваласа кăларма, пирĕн государствăн финанс вăй-хăватне малалла тĕреклетсе пыма, тăшман аркатнă ялсемпе хуласене, фабрикăсемпе заводсене, шкулсемпе библиотекăсене хăвăртрах юсаса ура çине тăратма пулăшĕ. Çакă вăл Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ чĕнсе каланисене, Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ чĕнĕвĕсене чи лайăх ответлени пулĕ! (Алă çупаççĕ).

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 9-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 9-мĕшĕнче УКРАИНАРИ 1-мĕш фронтăн çарĕсем, малалла тапăнса пырса, Киев облаçĕнчи БОРОДЯНКА ятлă район центрне тата халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче РУДНЯ-ВЕРЕСНЯ, ДИТЯТКИ, ОРАННСЕ, ПРИБОРСК, ШПИЛИ, БЛИТЧА, ЛЕОНОВКА, КАЧАЛЫ, НАЛИВАЙКОВКА, НЕЖИЛОВИЧИ, НЕБЫЛИЦА, СИТНЯКИ, ГРУЗКОЕ, ЮРОВКА, БЕРТНИКИ, КОРОЛЕВКА, ПАЛЯНИЧЕНЦЫ, ТРОСТИНКА, ЯЦКИ, ГЕРМАНОВКА, ДОЛИНА, ЖУКОВЦЫ, ВИТАЧЕВ ятлă пысăк ялсем тата БОРОДЯНКА, СПАРТАК чугун çул станцийĕсем пур.

КЕРЧЬ çурутравĕ çинче пирĕн çарсем малтанхи районсенчех хăйсен плацдармĕсене аслăлатасшăн çапăçнă.

НЕВЕЛЬ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă, малалла куçса, темиçе ял тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата пĕр-пĕрин çине тупăсемпе миномётсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн çарсем пур фронтсенче те нимĕçсен 71 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлă артиллери тăшманăн 13 самолетне персе ӳкернĕ.

НОЯБРĔН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 10-мĕшĕнче УКРАИНАРИ 1-мĕш фронтăн çарĕсем, наступлени туса пырса, Киев облаçĕнчи ИВАНКОВ, ГРЕБЕНКИ ятлă район центрĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра РОССОХА, КАРПИЛОВКА, КОВАЛЕВКА, КОННАЯ ВЫДУМКА, ДОМАНОВКА, РУСАКИ, ФЕДОРОВКА, СУКАЧИ, ЯХНОВКА, РАСКА, ПЕСКОВКА, МАЙДАНОВКА, ЗАБУЯНЬЕ, КОМАРОВКА, РАЕВКА, РАКОВИЧИ, СТАВИШЕ, ВЫСОКОЕ, ЛАЗАРЕВКА, ДУБРОВКА, ХОМУТЕЦ, ВИЛИШКА, ДЕДОВЩИНА, ВЕПРИК, ПИНЧУКИ, СТЕПАНОВКА, МАКЕЕВКА, ВАСИЛЕВО, ЧЕРНЯХОВ, МИРОВКА ятлă ялсем пур.

КЕРЧЬ çурутравĕ çинче пирĕн çарсем малтанхи районсенчех плацдармсене аслăлатасшăн çапăçнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

НЕВЕЛЬ хулинчен хĕвеланăçнерехри тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн чаçсем çаплах тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă, темиçе ял тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 9-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 53 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлă артиллери тăшманăн 12 самолетне персе ӳкернĕ

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мĕш фронтăн çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени боецĕсем çапăçса Тетерев шывĕ урлă каçнă та Киев облаçĕнчи Иванков ятлă район центрне тытса илнĕ. Çав районрах пирĕн подразделенисем пĕр ушкăн гитлеровеца, 1.500 çынна çити, шыв хĕррине хĕстерсе лартнă та аркатса тăкнă. 30 тупă тата çар хатĕрĕсем тиенĕ пысăк обоз тытса илнĕ. Пĕр чаçри боецсем нимĕçсен юсавлă 12 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 8 тупă, боеприпассен складне, хими пурлăхĕн складне тата радио пурлăхĕн складне тытса илнĕ. Каялла чакнă чухне нимĕçсем хăйсен 19 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 8 тупăпине сирпĕнтерсе янă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем, малалла куçса, Гребенки ятлă район центрне тытса илнĕ. Çавăн пекех тата халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнĕ. 2.000 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ, 25 танк, 40 тупă, 50 бронемашинăпа бронетранспортерне пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Тăшманăн çар пурлăхĕн пысăк склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Керчь çурутравĕ çинче пирĕн çарсем хăйсен плацдармĕсене аслăлатасшăн çапăçнă. Керчь хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн подразделенисем тăшмана атакăланă та хаяррăн çапăçнă хыççăн нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ пунктне тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Керчь хулинчен кăнтăртарахра тăшман пирĕн çарсене Керчь проливĕ урлă каçма чарма хăтланнă. Пĕр чаçри артиллеристсем тăшманăн икĕ торпеднăй катерне шыва путарнă. Унсăр пуçне тата флот авиацийĕ тăшманăн хуралта çӳрекен катерне тата хăвăрт çӳрекен десант баржине шыва путарнă.

* * *

Невель хулинчен хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн минăсем лартса тултарнă вырăнĕсене тата пралук картисене сиенсĕрлетсе малалла куçнă та халăх пурăнакан вăйлă çирĕплетнĕ темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсем, совет чаçĕсем малалла куçса пынине чарма хăтланса, 5 контратака тунă. Пирĕн боецсем тăшманăн пур контратакисене те ăнăçлăн сирсе янă, гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра нимĕçсем хăйсен унччен çухатнă позицийĕсене каялла туртса илме хăтланнă. Пирĕн çарсем нимĕçсен контратакисене пăчлантарса лартнă. Нимĕçсене пур йышпи хĕçпăшалпа та персе аркатнă та, гитлеровецсем каялла чакнă, çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 600 вилли ытла выртса юлнă тата персе çĕмĕрнĕ 6 танк тăрса юлнă. Тыткăна илнисем пур. Трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Украинăра кĕрешекен партизансен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа тăракан отрядĕнчи разведчиксем çакна пĕлсе килнĕ: Припять шывĕ тăрăх тăшманăн çар хатĕрĕсем тиенĕ баржисен караванĕ пынă. Засада туса, партизансем çав баржăсене тата вĕсене туртса пыракан буксир пароходне пулеметсемпе тата танксене перекен пăшалсемпе пеме пуçланă. Буксир пароходне тата çар хатĕрĕсем тиенĕ икĕ баржăна шыва путарнă. Ровно облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрядĕнчи пĕр ушкăн чугун çул çине минăсем лартса тухнă. Нимĕçсен çар эшелонĕ, çав минăсем çине пырса кĕрсе, сирпĕнсе кайнă. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем 100 çын ытла вилсе пĕтнĕ е аманнă.

* * *

Киев районĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене тыткăна нумай илнĕ. Нимĕçсен 596-мĕш пехотнăй полкĕнче пулнă обер-фельдфебель Бернгард-Вельтзак çапла каласа панă: «Манăн взвод позицие тытса тăма пултараймарĕ, каялла чакрĕ. Лауц майор, çакна пĕлсен, мана командăй пункта чĕнтерчĕ. Позицие приказ памасăр хăварнăшăн эпĕ сана персе пăрахатăп, — тесе кăшкăрашрĕ, тупăсенчен сурчăк кăларса. Анчах та тепĕр кунне, вырăссем атака пуçласа ярсан, пĕтĕм взвод, хăраса ӳксе, вăрмана тарчĕ. Салтаксем каллех тыткăна парăнасси çинчен калаçма пуçларĕç. Виçĕ красноармееца курсанах, эпир вĕсене хамăр хĕçпăшала патăмăр та пĕтĕм взводĕпех тыткăна парăнтăмăр». Нимĕçсен 172-мĕш пехотнăй полкĕн штабĕнчен тыткăна лекнĕ писарь ефрейтор Ганс Зимбах çапла каласа панă: «Октябрь уйăхĕнче полк штабĕнче приказ илчĕç. Приказра çапла каланăччĕ: Киев вăл Украинăн чĕри. Вăл хулашăн темĕн чухлĕ юн тăкмалла пулсан та ăна нихăçан та вырăссене памалла мар. Киева хӳтĕлесе, пирĕн чăнахах та темĕн чухлĕ халăх пĕтрĕ. Нимĕç çарĕсем пĕтĕ йывăр çухату тӳсрĕç, анчах та вырăссем эпир хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкрĕç те Киева тытса илчĕç».

* * *

Аяларах нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Орел облаçĕнчи Алешковичи ялĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕç оккупанчĕсем пирĕн яла аркатса, тустарса хăварчĕç. Гитлерла çынçиенсем майăн 7-мĕшĕнче пĕр подвала стариксен, хĕрарăмсен тата ачасен ушкăнне хăваласа кĕртрĕç те чĕрĕллех çунтарса ячĕç. Çав вутра 40 çын çунса кайрĕ. Вăл шутра Степан Журавков, Мария Лунькова тата унăн 2 çулхи ачи, Мария Журавкова тата унăн пĕр çулхи хĕрĕ тата ытти çынсем те çунса кайнă. Гитлерла бандитсем пирĕн яла йăлтах çаратса тухрĕç. Халăхран мĕнпур хакла япаласене йăлтах туртса илчĕç. Каялла чакма пуçласан, нимĕçсем колхозниксен 500 килне мĕнпур хуçалăх хуралтисемпе пĕрлех çунтарса ячĕç».

Акт çине çак колхозницăсем алă пуснă: В. Журавкова, А. Филаченкова, М. Тимошина, Т. Слепухова В. Морозова, А. Журавкова тата ыттисем те.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 278 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 84 п. л.